

Аскольд Де Герсо

# Юратап эп сана…

Аскольд  Де Герсо

# Юратап эп сана

«Издательские решения»

**Де Герсо А.**

Юратап эп сана / А. Де Герсо — «Издательские решения»,

ISBN 978-5-44-966883-7

В этой книге собраны разножанровые произведения разных лет и отражают различные стороны нашей многогранной жизни, что не выразить в нескольких словах, проще неспешно прочитать…

ISBN 978-5-44-966883-7

© Де Герсо А.

© Издательские решения

# Содержание

Психеяпа Амур 6
Конец ознакомительного фрагмента. 26

# Юратап эп сана

# Аскольд Де Герсо

© Аскольд Де Герсо, 2019

ISBN 978-5-4496-6883-7
Создано в интеллектуальной издательской системе Ridero




Хаклă вулаканăм!

Сирĕн аллăрта Аскольд Де Герсо çыравçăн иккĕмĕш чăвашла кĕнеки. Ку кĕнекене тĕрлĕ вăхăтра çырнă хайлавсене кĕртес терĕм, çавăнпа та мĕнле-тĕр çыхăну хайлавсем хушшинче шырама кирлех мар. Калавсенче паянхи çамрăксем хушшинчи хутшăнусем: савăнăçпа хурлану, юратупа кĕвĕçӳ – пурте вырăн тупаççĕ. Пурăннă пурнăçра пурте пулать, кунпа нимĕн те тума çук, çавах та хăшĕ пĕр йăнăшсене сирсе ямашкăн пур, çавна вĕрентмеççĕ-и пире классиксен хулăн романĕсем? Курас текен – курать, тупас текен – тупатех, çавах та нихăш романра та уççăн пĕлтермеççĕ, унта сăнарсен пурнăçĕ тăрăх кăтартса пырать çыравçă.

Ку хайлавсен пуххинче те нихăшĕнче те вĕрентсе çырни çук, тĕслĕхсем вара аванах. Пирĕн кашниййĕн çуралсанах умра темĕн чухлĕ çул, çавă кăна-и, кашни кунхине ир çинчен ыйха сирсен умма çĕнĕ çулсем тухаççĕ, хăшне суйласа илетĕн, çавăн пек пулать кун. Юмахри паттăра та çăмăлрах пулнă: ун умĕнче виçĕ çул анчах, çитменне кашни пирки пĕлтернĕ: тӳрĕ каятăн – утна çухататăн, сулахая каятăн – чысна çухататăн, сылтăма çул тытсан пуçна çухататăн. Пире вара никам та палăртмасть, хамăр суйласа илмелле тĕрĕс çула.

Сăвăлла хайлавсене ырлакансем валли ку пухура уйрăм сăвăсем, поэмăсем пур. Икĕ поэмăна авалхи грексен халапĕсем тăрăх шăрçаланă.

Хаклă вулаканăм, енчен те мĕнле-тĕр ыйтусем тухсан, сĕнӳсем пулсан, тӳрремĕн çыру çырма пултаратăр. Адрес: askolddegerso602@gmail.com

# Психеяпа Амур

Авалхи саманара
Пулса иртнĕ ку ĕçсем,
Пурăннă пулать патша
Юптараççĕ халапсем.

Çитĕннĕ ун виçĕ хĕр:
Калама çук, хÿхĕмсем,
Илемлĕ, хитре, капăр
Тата пур-ши сăмахсем.

Чи кĕçĕнни пуринчен
Ытларах та чиперкке,
Сăнарлама питĕнчен
Сăмах çук-çке, тÿлекке.

Мĕскерпе танлаштарас-ши
Пикен тăрăс пÿ-сине,
Мĕнле çырса кăтартас-ши
Çак асамлă илеме?

Çавах та тăрăштаратăп
Сăвăçăн вĕт, ирĕк çук.
Пикене, ак, сăнарлатăп
Унсăр мĕнле юптару.

Сарă тĕслĕ çÿçĕсем
Икĕ хулăн çивĕтре,
Тÿпен кăвак куçĕсем
Ытарайми те хитре.

Вăрăм куç хăрпăкĕсем
Хумханаççĕ илĕртсе,
Çакăн пек тĕлĕнтерÿ
Татах пур-ши тĕнчере?

Пиçнĕ çырла тутисем
Йăл-кулупа палăрсан,
Сар хĕвелĕн шевлисем
Пытанаççĕ вăтанса.

Çинçе săпсан пилĕклĕ
Кам аллисем ыталĕç?
Камăн савнă куçĕсем
Çак илемпе киленĕç?

Çĕршывра пурнан çынсем-и

Е килнĕ-и инçетрен,
Ятарласа пикене
Курма килнĕ кунсерен.

Тĕрлĕ çĕре сарăлса
Хыпар çитнĕ пĕлĕте,
Канăçлăх, ак, çухатса
Кайса курма хĕтĕртет.

Афродита тӳперен
Аннă пулать хĕр пулса,
Пикене курас тесе,
Илемĕпе ăмсанса.

Курма килен халăхсем
Каласан săвăласа:
Йăтса килеç тĕрлĕрен
Парнесем хапăл туса.

Сăвăçсем халалласа
Шăрçалаççĕ сăвăсем
Илемпе касмăкланса
Туртăнаç ӳнерçĕсем.

Турăш евĕрех чысласçĕ
Илĕртӳллĕ пикене,
Тилмĕрӳ унтан ыйтаççĕ
Тĕрлĕрен сĕнеç чӳкне.

Афродита кĕвĕçсе
Тавăру çинчен шутлать.
Вăл Психея çилленсе
Хурлантарма шут тытать.

Çав шухăшпа Амура
Пĕр кунхине йыхăрать,
Йĕркесĕр çынна савма
Ĕнентерме вăл хушать.

Ик аппăшĕ те пикен
Патшасемпе мăшăрлă.
Пĕр Психея хальллĕхе
Тăр пĕчченех – хăй майлă.

Çавăнпа-ши тарăхса
Юмăçа ашшĕ каять,
Сăлтавне уçма ыйтса
Сăрт çамкине çывхарать.

«Хĕрне чул хысак çине
Ертсе кил эс каçхине,
Пулас мăшăр çунатне
Сарса çитĕ ун патне.

Тискер кайăклă хаяр,
Çавнашкалах ултавлă,
Çынсене кăна вăл мар
Турăшсене çĕнтернĕ».

Çавăн пек сăмахсемпе
Хуравлать юмăç ăна,
Патша сехри хăпнипе
Кермене васкав утать.

Анăç енне туртăнса
Хĕвелĕ куна вĕçлет.
Патша канăç çухатса
Керменте утас виçет.

Чарăнса вăл кăшт тăрать-ши
Шухăшсене майласа,
Ĕнсине вăл е хыçать-и
Нимĕн тума аптраса.

Хĕвел анчĕ сăрт хыçне,
Кĕренленчĕç пĕлĕтсем.
Нимĕн те килмест пуçне
Явăнаççĕ шухăшсем.

Капларах тусан мĕнле-ши
Йăнăшасран шикленет.
Тĕрĕс шухăш кам сĕнсе-ши,
Анчах та вăхăт иртет.

Ĕнтрĕк сăн та таврана
Çитнĕ çавă хушăра,
Каç пуласси инçе мар
Мĕскер тăвас тупата?

Акă, халне çитерсе
Хăй патне хĕре чĕнет.
Калаçмалли пур тесе
Пӳлĕме ертсе кĕрет.

Хупă алăк хыçĕнче
Мĕн калана-ши, патша?
Ун пирки халапсенче
Асăнман пĕр сăмах та.

Юмăçа, ак, пăхăнса
Ертсе каять вăл хĕре,
Мĕн хушнине тăнласа
Хăварать çав пĕччене.

Куççульсем шăпăртатса
Юхать пикен куçĕнчен,
Çил вĕрет лăплантарса:
«Хăрушлăх çук нимĕн те».

Мĕн тесен те, чĕтренсе
Пулас мăшăра кĕтет.
Хумханса вăл, шикленсе
Ыйхăпала кĕрмешет.

Сар уйăх пĕлĕт хыçне
Шуса кĕчĕ тахçанах.
Пурте ыйхă авăрне
Çакланнă ĕнтĕ, паллах.

Çăлтăрсем те ыйхă витĕр
Çутатаççĕ çĕр çине
Ку мĕскер, палăрчĕ чăлтăр
Шуйлантарчĕ пикене.

Кăкăртан тухса тарас пек
Кăлт та кăлт тапать чĕре,
Пурнăçпа сывпуллашать е
Хытса кайрĕ халь пике.

Ним тума та хальхинче
Пытанма та вырăн çук.
Никам çук хӳтĕлеме
Куçсенчен юхать куççуль.

«Çавăн евĕр вĕçленет-шим
Пурнăçа курмасăрах,
Çамрăк ĕмĕр тĕпленет-шим
Юрату туймасăрах?»

Пĕринчен пĕри хăрушă
Килеç пуçа шухăшсем
Шикленӳллĕ тавралăх
Шуйланать-çке чун-чĕре.

Çав самантра сасартăк
Тӳперен Зефир анать.
Ыталаса пикене

Тӳпенелле ӑнтӑлать.

Вӑл ҫуначӗсем ҫинче
Инҫе ҫӗре ҫитерет.
Ешӗл курӑк хушшинче
Вӗҫеве Зефир вӗҫлет.

Илемлӗ йӗри-тавралӑх,
Ҫумранах ҫырма юхать.
Тӗлӗкре, тейӗн, садра
Чун илемпе йӑмӑхать.

Асамлӑ тӗспе капӑрлӑ
Вӗҫсе иртеҫ кайӑксем,
Ҫуйхашаҫҫӗ умлӑ-хыҫлӑ,
Ян! Каяҫҫӗ сассисем.

Пӗр кайӑк, ав, инҫех мар
Мӑнаҫланса утаслать,
Ҫакӑн йышши курӑма
Пуҫласа пике сӑнать.

Йывӑҫ ҫинчен ҫмӗҫсем
Илӗртеҫҫӗ тутанма,
«Хальхинче эпӗ ӑҫта-ши
Леш тӗнчере е кунта?»

Чӗпӗтсе те вӑл пӑхать
Хӑйӗн ҫепӗҫ аллине,
Ырату-ҫке палӑрать
Чӗпӗтни те сисӗнет.

Ку чухне, ав, тӗлленмест
Пурте чӑн – куҫ умӗнче,
Анчах та вӑл чӗптемест
Тыткӑнлать юмах тӗнчи.

Ҫывӑхра ҫӳллӗ кермен
Ылтӑн тӗспе вылянать.
Пикене Зефир иртме
Аллипеле кӑтартать.

Хаклӑ йышши чулсенчен
Сукмак хывнӑ кермене,
Хӗвел ылтӑн ҫутинче
Йӑлтӑртатаҫ тӗрлӗрен.

Сарӑпа, кӑвакӑн, хӗрлӗн
Уйӑрма та хӑшне ҫук.

«Хăш патшан-ши керменĕ,
Мĕнле тытас калаçу?»

Кĕлчечекĕн çеçкисем
Саламлаççĕ пуç тайса,
Çакăн чулĕ илемрен
Пуç каймалла çаврăнса.

Шикленсе сукмак çине
Утасларĕ сарă хĕр,
Кермен çÿллĕ алăкне
Асамлă уçрĕ-ши вăй?

Пĕр тĕлĕнет, пĕр савнать
Пике умри курава,
Çакăн пек те-ши пулать?
Çăтмах евĕрех шалта.

Хĕр пÿлĕмсенче çÿрет
Пур çĕрте те шăп та лăп.
Пĕр никам та çук-ши, тен,
Çук, çитеççĕ сасăсем.

Мĕн çинчен те шутласан
Куç умне ĕмĕт тухать,
Ак, сĕтел пуçтарăнса
Куркана алă тăсать.

Сĕтелĕ çинче мĕн çеç çук
Тĕрлĕ-тĕрлĕ çимĕçсем,
Ылтăн чашăк пыл та çу
Кĕмĕл чашăк çырлисем.

Юрăçсем килентерсе
Шăратаççĕ юрăсем.
Хĕр кăмăлне килмелле
Вĕсен çепĕç кĕввисем.

Темиçе те кун иртет
Никама та вăл курмасть,
Каç çитсен мăшăр килет
Ир çитсессĕн – çухалать.

«Эпĕ камне эсĕ пĕлсен,
Киленÿ çĕтет йăлтах», —
Çамрăк мăшăр пикене
Вăрттăнлăха систерет:

«Çав тер çепĕç саслăскер,

Хăрушă пулас çук», – тет.
Анчах мăшăр сăнарне
Хальлĕхе вăл тĕпчемест.

Йăмăкĕшĕн хурланса
Тарăхаççĕ аппăшсем.
Пур çĕрте те шыраса
Килсе тухаççĕ вĕсем.

Мĕн чухлĕ атă-пушмак
Çĕтне вĕсем шыранса,
Çавах тăван йăмăкне
Шаннă пулать, тупасса.

Тĕл туса аппăшсене
Кĕтсе илет сарă хĕр,
Кермен тăрăх çӳретсе
Паллаштарать пурнăçпе.

Ăмсанса пăхаç куçсем
Йăмăкĕн пуянлăхне,
«Кам пулать сан мăшăру?
Хăш патшалăх пуçлăхĕ?

Сăн-питрен вăл еплерех
Чипер-ши е хитре мар?
Ӳт-пĕвĕ ун мĕнлерех
Яштака е мăнтăркка?»

Халиччен те эп ăна, —
Кун çутинче курман, – тет. —
Вăл çĕрле кăна манпа
Ирхине çумран çĕтет».

Çавăн пек сăмахсемпе
Хĕр пĕлтерет хăй çинчен,
Çийĕнчех аппăшĕсем
Вăрттăнла канаш сĕнеç:

«Каçхине хĕвел анать те
Ыйха сир эс хăвăнтан,
Мăшăру килĕ çитет те
Вырăнтан та ан хускал.

Упăшку ыйха путсан
Çурта çут эс вăрттăн çеç,
Те пĕрер-пĕрер усал вăл
Те çĕлен вăл – илĕртмĕш».

Аппăшсем каланă пек
Хĕр çурта çутать çĕрле,
Çывхарать кравать патне:
Упăшка çыврать канле.

Ылтăн тĕслĕ çӳçĕсем
Йăлтăртатаç çутăра,
Пикен савнă куçĕсем
Пăхса савнать мăшăра.

Ыйхăра тĕлленнĕрен-ши
Йăл-кулу тутисенче,
Юмах евĕрех-çке каç
Асампа тулли тĕнче.

Юрату турăш куçне
Пур илемĕпе курнать,
Хĕр пĕшкĕнсе мăшăрне
Çепĕççĕн çеç чуптăвать.

Шутламан пике çавна:
Çуннăçем, çурта йĕрет.
Тумламсем тумлаç çуртан
Инкек çуммăнах çӳрет.

Çурта çути куçĕнче
Вылянчăклăн ялкăшать,
Юрату çулăмĕнче
Ылхан хăй ĕçне тăвать.

Ах! Инкек! Вĕри ăвăс
Тумлать мăшăр хул çине,
Ыратăва тӳсеймесĕр
Амур уçать куççене.

Ӳкĕтлĕн куççем пăхаççĕ
Пике çине тинкерсе,
Ăнланчĕ пике: йăнăшнă,
Ма итлесе аппăшне.

«Эх, савниçĕм, мĕскершĕн
Пăхăнмарăн хушнине,
Ылхан халĕ пирĕншĕн
Пурнăçлать хура ĕçне».

Çавăнтах вăл кантăкран
Вĕçсе тухать хăварса,
Сарă хĕре хуйхăра
Йăнăшнăшăн хурланса.

Хыҫӗнчен тухса чупать,
Кӑлӑхах. Вӑл инҫетре,
Афродита, ак, ҫыхать
Амурӑн пиҫне хулне.

Тата тепӗр тавӑру
Шутласа тупать хӗре:
«Илем ещӗкне тыт ҫул
Хальллӗхе вара ӗҫле».

Ӗҫленӗ май хӗр пухать
Ҫул ҫине вак-тӗвексем,
Тӗрлӗ майӑн шухӑшлать
Тупсӑмӗ ҫук ниепле.

Вӑт ҫапла хӗр ҫул тытать
Илем ещӗкӗ патне,
Ҫул тӑрӑх вӑл кӗл тӑвать
Ватӑ Турӑш амӑшне.

Тур амӑш сар пикене
Малалли пирки калать.
Мӗнлерех унта ҫитме
Еплерех хӑйне тытма:

«Ещӗке эсӗ ан уҫ,
Хӑрушлӑха вӑл таять»,
Ҫав сӑмахсемпе карчӑк
Куҫ умӗнчен ҫухалать.

Хӗр чылай ҫулпа утать-и
Кун кунлать те, ҫӗр ҫӗрлет.
Тӗ хӗвелӗ ҫутатать-и
Каҫхине уйӑх ҫӳрет.

Ҫитрӗ, акӑ, шыв хӗрне,
Анлӑн сарӑлса выртать.
Шыв тӗкӗрӗ тыткӑнлать те
Ҫавах шухӑша ярать.

Аслӑ ҫырма каҫма ҫук
Пӗр Харон ҫеҫ каҫарать.
Анчах та тискер йытти
Шӑлӗсемпе йӑлтӑрать.

«Вилесен ҫырми урлӑ
Каҫать пике кимӗпе,
Ват карчӑк канашӗпе

Шăплантарать йыттине.

Кĕçех ещĕке илсе
Çĕр çине вăл таврăнать.
Усă курас-ши тесе,
Ещĕке пике уçать.

Кĕтнĕ илем вырăнне
Ещĕкрен тухать усал,
Ним ăнкартман пикене
Тарăн ыйха путарса.

Усал сывлăш алхасать,
Сиен кӳрет халăха,
Те çилĕ вĕрет урса,
Тӳсейми çук шăрăхпа.

Хӳтĕлĕх ыйтса халăх
Турăшсене тилмĕрет,
Зевс пуринчен те асли
Олимпра канаш сĕнет.

Çӳллĕ ту çинче пуху
Йĕркелет Турăшсемпе,
Афродитăн сăн хĕрхӳ
Айăпĕ пĕр ун çинче.

Телее, Амур çитет,
Вăратать вăл сăнăпа,
Ещĕке часах леçме
Сĕнет вăл Психейăна.

Турăшсен патши патне
Хăй васкавлăн вĕçтерет,
Савнийĕ хутне кĕме
Вăл патшана тилмĕрет.

Зевс Амурăн сăмахне
Тăнласа итлет тимлĕн.
Юрату асамлăхне
Хăй çинче пĕлет чупкăн.

Леда ятлă арăма
Акăш пулса илĕртнĕ.
Тепĕрин вĕчи çине
Çумăр пулса тăкăннă.

Арăмĕ вара хăйĕн
Тĕшмĕртет кил таврашра.

Çавнашкал-ши, тен, шăпи
Пĕтĕм влаç пĕр алăра.

Çавăнпа та-ши тен,
(Халапсенче хурав çук).
Пикене хута кĕрсе
Вилĕмсĕрлĕх парнелет.

Хăйĕнчен вăл чаплă туй
Çамрăксене йĕркелет.
Чĕрере пур юрату
Темĕне те çĕнтерет.

**Ациспа Галатея**

Ешĕл курăк пур çĕрте
Çитĕнеççĕ çимĕçсем.
Йыхăраççĕ хăй патне
Ывăçпа виноградсем.

Хумханать тинĕс йăвашшăн,
Çуйхашаççĕ кайăксем,
Хĕвелĕ пăхать ачашшăн —
Çăтмах тейĕн ку çĕре.

Кашни кун пĕр вăхăтра
Хĕвел çӳллĕ çĕкленсен,
Килсе тухать тинĕсрен
Ытарма та çук пике.

Хысĕнчен хумсем сирсе
Татах тухаç пикесем.
Ку тинĕс патши Нерей
Илĕртӳллĕ хĕрĕсем.

Пуринчен те хитререх
Галатея пулнă теç.
Тинĕсри моряксене
Пулăшу кӳнĕ вăл çеç.

Сывлăша хумсем хăрушшăн
Çĕкленеç-и хăмсарса,
Карапсене айлĕн-çийлĕн
Çавăраç-и путарса.

Çак йышши çанталăкра
Галатея пĕр шанчăк:
Хумсене лăплантарма
Çителĕклĕ пĕр авăк.

Халь кăна хаяр хумсем
Çак хĕр çепĕç сассинчен,
Майĕпен пĕчĕкленсе
Çухалаççĕ тинĕсре.

Çÿллĕ тури шăтăкра
Пурăннă сăнсăр циклоп,
Кĕтÿ кĕтнĕ айлăмра
Хевтепе пулнă улăп.

Сăрт çиййĕпе çумăрта
Кĕтĕвне вăл çÿретнĕ,
Хысаксене хушăран
Катмакпала тĕпретнĕ.

Пĕр шухăшсăр çак таран
Иртттернĕ вăл ĕмĕрне,
Шăхличепе выляса
Хăш чух юрă сĕрленĕ.

Тен, çавнашкал малалла
Пурнăçĕ пыратчĕ-ши:
Кĕтĕвне ертсе çыра
Килсе тухма пÿрнĕ-ши?

Сăрт çамкинчен инçете
Тинкерет циклоп тимлĕн,
Хумсем тинĕс çиййĕпе
Шăмпăлтатаççĕ лăпкăн.

Хăйĕн пысăк кÿсекне —
Карап мачтипе пĕр тан,
Пăрахать çерем çине,
Кăларать шăхлич унтан.

Шăхличĕ вĕрсен, тавралăх
Сисчÿвленсе шăпланать.
Кайăк-кĕшĕк самантрах
Хăй йăвинче пытанать.

Акă, шыв çине сирсе
Ылтăн хĕвел тухнă пек,
Циклопа тĕлĕнтерсе
Килсе тухрĕ сар пике.

Полифем куç чакăртса
(циклопа çапла чĕнеç),
Сывлама та чарăнса

Пăхса ларать ун çине.

Асамлă курăну, тейĕн,
Шикленет çухаласран.
Галатея – пур – шыв çийĕн
Киленет чăмпăлтатса.

* * *

Полифемăн сăнарне
Уçса пама питĕ хĕн,
Илес-милес сăн-питне
Кăтартма сăмах çук-мĕн.

Лăпăс-лапăс çӳçĕсем
Çумăрта çеç шыв кураç,
Ӳссе кайнă сухалсем
Пĕтĕмпех питне сăраç.

Пĕртен-пĕр куç циклопăн
Вырнаçнă çамки çинче,
(Халь куратăр, ав, хăвăр
Шăнăçмасть сăмахсенче).

Çак сехмет сар пикене
Пĕрре курсах куç хывать,
Астаррăн вăл тинкерет
Хăрах куçĕпе шыва.

Кам юраттăр эсреле
Сăн-сăпатсăр усала.
Тирпейленме Полифем
Кăнтăралла çул тытать.

Катмакпа çӳç якатма
Тытăнать вăл çитсенех,
Çăлăнаççĕ пайăркан
Тусăнса пĕтнĕ çӳçсем.

Чӳхенсен çăмăлтарах
Пулатчĕ-ши якатма?
Хĕн пулĕ çав, сахалрах
Ăс пулсассăн пуçăнта.

Çап-çутă çивчĕ çурла
Кăларать вăл кĕтесрен,
Сухалне ывăçласа
Кĕскетме хатĕрленет.

«Тирпейлерĕм сăн-пуҫа», —
Кӳленчĕкрен тинкерет.
Чунсăрне анчах шута
Вăл илмен-тĕр, куҫкĕрет.

Канăҫа циклоп ҫухатнă
Ҫемĕҫелнĕ чĕрипе.
Ҫавах та ăна шăпа
Пиллемен-тĕр телейне.

Полифем пĕлмен пикен
Ацис – савнă каччи пур.
Кăмăллаҫҫĕ пĕр-пĕрне —
Яшсен ҫирĕп юрату.

Кăпăклă хумсем чупаҫҫĕ,
Кăпăклă хумсем сирсе.
Тĕл пулаҫҫĕ савăнса
Галатеяпа Ацис.

Ҫĕркаҫа мĕнле чăтса
Шурăмпуҫ ҫывхарнине
Вĕсем кĕтнĕ хумханса
Теприне ҫитессине.

– Ырă кун сана, савниҫĕм! —
Хумсем витĕр сас ҫитет.
– Ырă кун, ҫутă телейĕм! —
Хирĕҫле хурав вĕҫет.

Ҫĕнĕ кун – ҫĕн йăл-кулу
Туйăмсем ҫирĕпленеҫ.
Савнипеле калаҫу
Чĕрене килентерет.

Ҫыр тăрăх вĕсем ҫӳреҫҫĕ
Алла-аллăн тытăнса,
Полифем сăнать ҫиллессĕн
Юратăва ăмсанса.

Кĕтӳне ертсе ҫыра
Килсе тухать вăл, курать.
Алла-аллăн тытăнса
Ациспа пике утать.

Полифем сăнĕ хăрушшăн
Кайăк та ҫумĕн вĕҫмест.
Тинкерен куҫĕ юнавлăн
Тутисем ун шăл йĕреҫ.

Шăхличĕ хăрушшăн вĕрчĕ
Çĕр чĕтренчĕ кисренсе.
Тинĕсре хумсем çĕклерĕ
Асар-писер çил иртсе.

Çамрăксен чĕри шуйланчĕ —
Ырăпа вĕçленес çук.
Полифем хысак шыранчĕ
Циклопран тармашкăн çук.

Тинĕсе пике ыткăнчĕ
Хӳтлĕ хумсен ытамне,
Пĕр хысак çитсе çĕмрĕлчĕ
Ацис юлчĕ ун айне.

Чул хысак ик ванчăка
Çурăлчĕ те, варринче
Хăмăш курăнчĕ куçа
Çăл куçăн тĕкĕрĕнче.

Шывĕ, ак, тинĕс енне
Тупрĕ çулне шыраса,
Часах хумсем сирпĕнсе
Ыталарĕç çырмана.

Халăхра çакăн йышши
Халап юлнă ас илме,
Ĕмĕрне те ан çухатăр,
Чăн юрату илемне.

**Купидон**

**К**арса илнĕ тĕттĕмлĕх
Çăлтăрсем те палăрмасть.
Кун-каça ырнă халăх
Канлĕ çывăрать.

Ăнсăртран сас пулчĕ
Шаккаççĕ алăка.
Кам-тăр сасă пачĕ
Сирчĕ ыйăха.

Çакăн пек çанталăкра
Кам çӳретĕр терĕм,
Çук, шаккаççĕ хытăрах
Тĕлленчĕ, темерĕн.

«Кам пĕр шикленмесĕр,

Каçхине çӳрет?» —
Çилле пытармасăр
Чĕнтĕм хайхине.

«Ӳт-пӳ шăнчĕ пĕтĕмпех
Сивĕ çил кашлать,
Хăв куратăн, ав, тӳпе
Хуп-хура тавра.

Мĕскертен хăратăн,
Эп пĕчĕк çеç ача,
Çул-йĕртен аташрăм
Ярсамччĕ ăшăнма».

Çакăн евĕр сăмахсем
Çитрĕç, акă, тул енчен.
Çуртана хăвăрт илсе
Çутатрăм хальхинче.

Тулта çумăрĕ чашлать
Çиçĕмĕ çиçет.
Урнă çилĕ ахăрать
Хӳмене силлет.

Лăпланма та шутламасть
Чарăна пĕлмест,
Çӳлти уйăх çути те
Çĕр çине çитмест.

Акă уçрăм алăка,
Ку тата мĕскер?
Тăрать пĕчĕк çеç ача
Пĕр тумтирсĕрскер.

Икĕ шурă çунатне
Асăрхарăм кун çинче,
Ухăпа сăннисене
Хĕстернĕ хул хушшине.

Иртсе лар кăмак умне,
Çав тер вĕт шăннă,
Халь те çавă каçхине
Вут чĕртес шут пулнă.

Ухăпа сăннисене
Ача хучĕ çумнерех.
(Каччăсемпе хĕрсене
Çак улаха сĕтĕрет).

Авӑ, ҫитрӗ ӑшӑнса
Каланҫма пуҫларӗ.
Ухӑ тытрӗ выляса
Сӑнӑ ункӑларӗ.

Ман ҫине пӑхса хӑй
«Пӑсӑлман-ши?» – тет.
Сӑнӑ вӗҫне ман енне
Чеен шӗвӗртет.

«Пӗртте пӑсӑлман-ҫке
Ухӑ ҫумӑрпа»,
Суранларӗ чӗрене
Ылтӑн сӑнӑпа.

Чӗрене вут хыпнӑн,
Ҫурасла сурать.
Купидон хаваслӑн
Савӑнса кулать.

«Кӳршӗре пике пур,
Сана пит савать», —
Вӑрттӑн ҫеҫ Амур
Сиплев савалать.

Ҫавхатер илемлӗ
Хӗр ҫитӗннӗ кӳршӗре,
Сӑпсан ҫинҫе пилӗклӗ
Епле чӑттӑр-ха, чӗре.

Пуринпе те ӑшшӑн,
Уҫҫӑн калаҫать.
Тӗнчере ҫук тейӗн,
Сасси тыткӑнлать.

Ҫав тери те ҫепӗҫ
Ҫӑл евӗр юхать.
Чӗре ман чул мар-ҫке
Ҫулӑмпа ҫунать.

Курӑнмасть кӑна,
Ҫиеле тухмасть.
Савнӑ пике сӑнӗ
Асӑмран каймасть.

Каҫхине тухсассӑн:
«Пӗтӗм чунтан ытарап:
Юратап, – тесе каласшӑн,
Темшӗн – вӑтанап.

Юратап сана, – тесессĕн
Енчен йышăнмасть?
Пурпĕрех пĕтетĕп
Чун тăнăçланмасть.

Пĕр каçхине вăйăра
Шанса пĕтме çук.
Уçрăм хамăн чĕрене:
«Арăм пул, Лисук!»

Ялти сарă пикене
Эпĕ савнă тахçанах,
Чĕрене уçса чĕнме
Хăюлăх сахалтарах.

Хальхинче те ăшшăн
Пăхрĕ ман çине,
Чĕнчĕ вăл йăвашшăн:
«Мĕн тейĕ, анне».

Мул енчен катăк та
Вăй-халăм ман пур.
Пурнăçри йывăрлăхран
Хĕрӳ чĕре пур.

Юратсассăн чĕререн
Пире ним те çитеймест
Савнă чĕре ăшшине
Вут кăвар та çĕнеймест.

Çулталăк çавăнтанпа
Иртсе кайрĕ ĕç-хĕлпе,
Кайăксем, ав, кăнтăра
Туртăнаççĕ картипе.

Лисукпа эпир телейлĕ
Çĕнĕ çуртра савăнса
Пурăнатпăр халь илемлĕ
Вулакана ыр сунса…

**Арçури**

Мур ăрувĕнчен тухнă-ши
Е алтас-ши тарăнрах,
Несĕле кам пуçарнă-ши
Калăпланă катăкрах.

Усалпа ăçтан тăван-ши

Тăрă шывăн пăлханçи?
Çанталăк епле тӳснĕ-ши
Мĕнле чăтнă ăрăмçи?

Пĕр шухăшсăр ăсталанă
Килпетсĕр юрăсене,
Куç курнине шăрçаланă
Хывнă сăвă йĕркине.

Шурлăх кăтăшне упранă
Тăвăрланнă канăçпа,
Пĕр шелсĕр пăрахăçланă
Сывпуллашнă пурнăçпа.

Типнĕ йывăçа тĕпленĕ
Упранă хунавсене,
Илемпе чунтан киленнĕ
Кăмăллăннă уйсемпе.

Хуçăлса ӳкнĕ турат-и
Тĕл тусассăн куç умне,
Аякка илсе хуратăп
Йĕркелетĕп çул çине.

Çур вăхăтĕнче хур-кайăк
Ырнă карти вырнаçать,
Кӳлĕре пурне те канлĕ
Уйăх çутă сапалать.

Ыйăха путмасть пĕр çамрăк
Акăш, амăшне тĕпчет:
«Мĕн вăхăт ĕнтĕ вĕçетпĕр
Çав тер анлă-шим тĕнче?

Аннеçĕм, ахах-мерченĕн
Мĕскер-ши йăлтăртатать»,
«Çăлтăрсем вăл, пĕчĕкскерĕм,
Пирĕн çула палăртать».

Анлă кӳлĕ сарăлса
Тĕкĕр евĕр çутатать.
Уйăх хăю ывăтса
Кӳль çийĕн кĕпер хывать.

Сĕтеклĕ симĕс курăкĕ
Выртса канма йыхăрать,
Пуç тайса ылтăн чечекĕ
Çĕнĕ кунпа саламлать.

Шурӑмпуҫ кӑшт палӑрсан
Карта пуҫӗ ҫӗкленет,
Хур-кайӑка вӑратса
Малалла вӗҫме чӗнет.

Хур картисем тӳпере
Какӑлтатса иртеҫҫӗ,
Акӑ ӗнтӗ тӗнчене
Ҫу кунӗсем ҫитеҫҫӗ.

Тӗрлӗ тӗслӗ сасӑпа
Янраса тӑрать вӑрман.
Вӗҫет куккук авӑтса
Сасӑ каять ян! Та ян!

Шӑпчӑксем юрӑ юрлаҫҫӗ,
Таврана илем кӳрсе,
Хӗвел шевлисем выляҫҫӗ
Кӳль шывӗнче чӳхенсе.

Курӑк хушшинче ҫырла
Тутанса пӑхма сӗнет.
Савнӑҫпа кӑкӑр тулса
Тӳпенелле вирхӗнет.

Пӗр кунхине ҫанталӑк
Ир ҫинченех улшӑнчӗ.
Хура пӗлӗт туртӑнса
Хӗвел тарса пытанчӗ.

Кӗмсӗртетет ҫӳл тӳпе
Калӑн тимӗрҫӗ ӗҫлет.

# Конец ознакомительного фрагмента.

Текст предоставлен ООО «ЛитРес».

Прочитайте эту книгу целиком, купив полную легальную версию на ЛитРес.

Безопасно оплатить книгу можно банковской картой Visa, MasterCard, Maestro, со счета мобильного телефона, с платежного терминала, в салоне МТС или Связной, через PayPal, WebMoney, Яндекс.Деньги, QIWI Кошелек, бонусными картами или другим удобным Вам способом.